Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

10 (7435) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи февралĕн (нарăс) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

25 çул кĕске вăхăт мар



Раиса Михайловна Романова Юнкă ял тăрăхĕнче вăй хурать. Февралĕн 2-мĕшĕнче вара çакăнта ĕçлеме пуçлани 25 çул çитрĕ. Кĕске мар тапхăрта мĕнле кăна çынпа калаçман-ши, йывăр чухне кирлĕ сĕнӳ, пулăшу паман-ши? Малтанах вăл счетовод-кассир пулса ĕçленĕ, халĕ вара ВУС инспекторĕ пулса тăрăшать. Ял çыннисем умĕнче вăл пысăк хисепре. Асталăхĕпе, тараватлăхĕпе çитĕнекен ăрушăн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Унăн пултарулăхне вара район администрацийĕн Хисеп грамотине пани те çирĕплетет.

Анлă лару

Инкек-синкеке асăрхаттарас тĕллевпе

Февралĕн 1-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата пĕтерес, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енĕпе ĕçлекен районти комиссин анлă ларăвĕ иртнĕ.

Ларура асăннă комиссин 2006 çулхи ĕçне-хĕлне тишкернĕ, 2007 çулхи задачăсене уçăмлатнă. Кунпа пĕрлех комиссин кăçалхи ĕç планне çирĕплетнĕ, Ленин яч. хис. хуçалăхри, «Колос» агрофирмăри сĕтçу фермисенче пушар тухассине асăрхаттарас, пушар хăрушсăрлăх нормисемпе правилисене пăснă тĕслĕхсене пĕтерес, тискер чĕр-чунсемпе килти выльăх-чĕрлĕхе, çынсене урнă чирпе чирлессине чарса лартас, ку чиртен сыватас тата профилактика ĕçĕсене туса ирттерес ĕçсемпе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

Хыççăн вара сирпĕнекен устройство майлă хатĕр пуррине тупса палăртнă май район администрацийĕн çуртĕнче вырнаçнă организацисемпе учрежденисен сотрудникĕсене хăвăртрах эвакуацилессипе тренировка ирттернĕ.

Хамăр инф.

Ыйту – хурав

РФ Пенси фончĕ 72 пин тенкĕ уйăрнă

Москакасси ял тăрăхĕнче пурăнакан пенсионерсенчен Ватă çынсен кунне паллă тума укçа-тенкĕ кам уйăрса пани, унпа епле усă курнине ăнлантарса пама ыйтса çыру килнĕччĕ. Ун çине Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ Н.П. ПЕТРОВА çапла хурав пачĕ:

«2006 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче тата октябрĕн 1-мĕшĕнче пур предприятисемпе организацисенче, ял тăрăхĕсенче ватă çынсене чысланă. Унта хуçалăхсен ертӳçисем, район администрацийĕн ответлă çыннисем хутшăннă. Художество пултарулăх коллективĕсем концертсем кăтартнă.

РФ Пенси фончĕ урлă районти пĕчĕк тупăшлă 76 пенсионера 72 пин тенкĕлĕх адреслă социаллă пулăшу панă. Çав шутран Москакасси ял тăрăхĕпе – 6 пенсионера. Республика бюджетĕнчен 74 пенсионер валли адреслă социаллă пулăшу валли 37 пин тенкĕ уйăрнă. Москакасси ял тăрăхĕпе – 2 пенсионер валли.

Мероприятисем ирттерме тата апатлантарма Ватă çынсен кунĕ ячĕпе республика бюджетĕнчен тата вырăнти бюджетран укçа-тенкĕ уйăрман. Ку енĕпе предприятисем, организацисем, учрежденисем тата уйрăм предпринимательсем пулăшнă.

Çур акине кам епле хатĕрленет

Акăпăр-и кăçал е çук?..

Кун вăрăмланнăçемĕн малти рете çур аки ыйтăвĕ тухать

Юр енчен пуянах пулман хĕл кунĕсене нарăс уйăхĕ хăйĕн тараватлăхĕпе саплаштарасшăн пулас: куллен çăвакан юр уйхирсене хулăн сийпе картларĕ пулин те, кунсеренхи çил-тăман юр çинче ĕнер юлнă йĕрсене картласах тăрать. Çавна пăхмасăрах кун тăршшĕ ӳснĕçемĕн, хĕвел шевли çĕр пичĕ çине тӳрĕрех те тӳрĕрех ӳкнĕçемĕн çуркунне çывхарни пирки те шутлаттарать. Мĕн акатăн – çав шăтать, мĕнле çур аки ирттеретĕн – çапла пурнăçа ăнăçтаратăн. Çакна шутласа район администрацийĕ те урамри хĕл кунĕсем çине пăхмасăрах çур акине хатĕрленес ыйтусем çине пысăк тимлĕх уйăрма пуçларĕ. Мĕн шутлатьха çывхаракан ĕçсем пирки хресчен хăй? Çак ыйту çине хурав шыраса иртнĕ кĕçнерни кун эпир Чкалов яч. хис. тата Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсене çитсе куртăмăр. Тӳрех каламалла, Исетерккĕсем те, Уйкас Янасалсем те ответлă тапхăра çанă тавăрса хатĕрленеççĕ.

Ильич яч. хис. хуçалăхра эпир трактор паркне çитнĕ чух, вăхăт каç еннелле сулăннăччĕ пулсан та, хуçалăхăн тĕп агрономĕпе тĕп инженерĕ Ф. Егоровпа Г.Сергеев тата трактор бригадин бригадирĕ А.Антонов парăмăр. Акăлчан ăнăçлăх ăнăçлăхне, юсавçăсемпе механизаторсен ĕçне контроллесех тăратчĕç. Тăрăшуллăха кура – ĕçĕ те. Иртнĕ кунсенче сӳресем юсассипе ответлăха хăйсем çине илнĕ Андриян Иванов слесарьпе Григорий Степанов тимĕрçĕ 48 сӳрене ĕç çине хатĕрлесе çитернĕ. Халĕ юсавçăсем сеялкăсене ĕçе хатĕрлессипе ĕç кунĕ ирттереççĕ.



“Çур акире сӳрепе сеялка çеç мар, кустăрма та кирлĕ пулать”, – теççĕ черетлĕ юсав ĕçне вĕçленĕ май А. Иванов слесарьпе (сулахайри) М. Степанов çамрăк водитель.

– Акана çурхи уй-хир ĕçĕсен планĕпе 11 сеялка тухмалла пулсан, паян иккĕшне çеç юсавсăр тесе хаклатпăр, – терĕ ĕçрен самантлăха уйрăлнă А. Иванов слесарь культиваторсен юсавлăхĕ пирки пысăк ыйтусемех çуккине палăртса.

– Çурхи кун çулталăк тăрантарать, тенине ăша хывса хатĕрленетпĕр çурхи ака-сухана. Кăçал пирĕн çуртрисене 600 гектара яхăн, 200 гектар нумай çул ӳсекен курăксем, 165 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем, 20 гектар выльăх кăшманĕ акмалла, 70 гектар çĕр улми лартмалла, кĕрхи культурăсене 270 гектар тата нумай çул ӳсекен курăксене 480 гектар çинче сӳрелемелле-апатлантармалла, – çур аки ĕçĕсен калăпăшĕпе паллаштарать хуçалăхăн тĕп агрономĕ Ф. Егоров паянхи куна ака вăрлăхĕн 80 процентĕ кондициллĕ пулнине, ыттине ака кондицине çитерессипе ĕçленине тата малашне вăрлăх туса илессипе ытларах ĕçлеме кăмăл пуррине палăртса. Вăрлăх тенĕрен, хуçалăх кăçал çурхи тулăн “ирень” сортне 2 тонна, урпан “эльф” сортне пĕр тонна иккĕмĕш çулхи аталантару питомникĕн шучĕпе акма планлаççĕ.

– Паян куллен юр çăвать те чылай хуçалăхсен паркĕсенче ял хуçалăх техники патне çын ура йĕрри пыни те курăнмасть. Çанталăк условийĕсене кура вара çур аки хăвăрт çитесси те шухăшлаттарать. Кашни сехет мар, кашни минутĕ шутра, паха самант патне çитсен техника юсама та, вăрлăх шырама та вăхăт юлмасан пултарать. Пахалăхлă, вăхăтра тата çителĕклĕ акса хăварăпăр-ши кăçал? – интересленетпĕр агрономран.

– Ку вăл пирĕншĕн хамăршăн тăтăш кун йĕркинче тăракан ыйту. Хуравĕ те хатĕр. Эпир хамăрăн техника вăйĕпе Ваçкасси тăрăхĕнчи пек тепĕр хуçалăхра та ака-сухана вăхăтра пурнăçлама пултаратпăр. Çакна валли техника та, ĕçлес текенсем те пур, – пулчĕ агрономом хуравĕ.

Чкалов яч. хис. хуçалăхра та кăçалхи çур акине ытти çулхисенчен ăнăçлăрах та пуçаруллăрах хатĕрленни курăнать. Хуçалăхăн тĕп агрономĕпе тĕп инженерĕ А. Лукинпа Н. Белов Исетерккĕсем çур акине хатĕрленессине иртнĕ кĕркуннех пуçланăран техникăна хире юсавлă кăларассипе пысăк ыйтусемех çуккине палăртса. Вăрлăх хатĕрлес ĕçе вĕçленĕ ĕнтĕ, минераллă удобренисемпе ыйтăва татса панă. Паян 69 сӳрепе 2 сеялка юсавран тухнă, 4 культиватор вырăнтан хускатасса çеç кĕтеççĕ. Курăк акмалли тепĕр сеялка валли сошниксем килессе кĕтеççĕ. Çур акине гусеницăллă 2 тракторпа кустăрмаллă 5 трактор тухмалла. Вĕсене механизаторсемпе комплектлас ĕç пырать.

... Кун тăршшĕ 2 сехет вăрăмланчĕ. Урамра çил-тăман пулсан та, çур аки çывхарнине чăн хресчен чĕрипе туять, туять те хатĕрленет.

С.НИКОЛАЕВ,
районти патшалăх техника надзорĕн инженер-инспекторĕ;
А. БЕЛОВ,
райхаçатăн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.
А. БЕЛОВ
сăн ӳкерчĕкĕсем.

Сулахайран сылтăмалла Г.Сергеев тĕп инженер, Л.Макаров механизатор тата Ф. Егоров тĕп агроном хуçалăх иртнĕ çул туяннă çĕнĕ МТЗ-82 тракторпа ГАЗ-3307 автомашинăна, ЭО-2621 экскаватора, СЗУ-5,4 сеялкăна, акара усă курмалли АКП-4 комбинированнăй агрегата çур акире епле эффективлăрах усă курмаллине планланă май çĕнни пирки ытларах шутласçĕ. Кусем çумне хуçалăх пĕлтĕр çĕнĕ “Енисей-1200” комбайнпа рулонлă пресс илнине те хушсан, ĕçлекен çĕнетӳ утăмĕнчен юлманни куç умне тухать. Çак утăм пуçламăшĕ вăл – çур аки.

Ача амăшĕн капиталĕ

Ачаллă çемьесене – патшалăх пулăшăвĕ

Раççей Федерацийĕн 2006 çулхи раштавăн 29-мĕшĕнче йышăннă «Ачаллă çемьесене паракан патшалăх пулăшăвĕн хушма мерăсем çинчен» 256-ФЗ номерлĕ саккунĕ 2007 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен вăя кĕчĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн амăшĕн (çемье) капиталĕн ирĕкĕпе – 250 пин тенкĕне 2007 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана çуратнă (усрава илнĕ) гражданссем усă кураççĕ. Патшалăхăн асăннă пулăшăвне пĕр хут кăна параççĕ.

Асăннă саккун халăхра тĕрлĕрен ыйту çуратрĕ. Çакă ял тăрăхĕсен кунĕсенче пулнăран та лайăх курăнчĕ. Çавăнпа та эпĕ тĕплĕнрех ăнлантарса пама РФ Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕн ертӳçинчен Е.М. АЛЕКСАНДРОВАРАН ыйтрăм.

– Елена Михайловна, çак капитала «чĕрĕ укçапа» илме пулать-и?

– Капитала «чĕрĕ укçапа» илме çук. Ăна ача виçĕ çул тултарсан амăшĕн кăмăлĕпе çав суммăна пĕтĕмпех е пайăн-пайăн пурнăç условийĕсене лайăхлатма, ывăл-хĕре вĕрентсе кăларма, амăшĕн (усрава илекенĕн) пулас пенсийĕн пухăнса пыракан пайне йĕркелеме хывма май пур.

– Çӳлерех асăннă ирĕкпе гражданссен хăш категорийĕ усă курма пултарать?

– Вĕсен шутне çаксене кĕртмелле: 2007 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана çуратнă (усрава илнĕ) хĕрарăмсем; 2007 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана пĕччен усрава илнĕ арçынсем; ашшĕ (усрава илекен) - иккĕмĕш ача çуралнă (усрава илнĕ) хыççăн çемье капиталĕн ирĕкĕ илнĕ амăшĕ вилнĕ е вăл ача тĕлĕшпе киревсĕр ĕç тунă, е ăна амăшĕн ирĕкĕнчен хăтарнă (усрава илнине пăрахăçланă) пулсан, гражданлăха пăхмасăр; ача (ачасем пĕр пек пайпа) - ашшĕ-амăшĕ (усрава илекенсем) вилсен, çемье капиталĕн ирĕкне илсе килекен ача тĕлĕшпе вĕсене ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕсĕр хăварсан, ачана хирĕçле киревсĕр ĕç тусан - çул çитсен е вĕрентӳ учрежденийĕнче куçăмлă майпа пĕлӳ илсен 23 çула çитиччен.

Çемье капиталне илес текенĕн вырăнти Пенси фончĕн уйрăмне заявлени çырмалла.

– Заявленипе пĕрле мĕнле документсем хатĕрлемеллеха?

– Çемье капиталне илес текенсен çак документсене хатĕрлемелле: çын кам пулнине, ăçта пурăннине, гражданлăха çирĕплетекен документ (паспорт); кашни ача çуралнине (усрава илнине) çирĕплетекен документ; амăшĕ е ашшĕ-амăшĕ (усрава илекен) вилнине, е амăшне, е иккĕшне те ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕнчен хăтарнине çирĕплетни.

Пенси фончĕн уйрăмне документсен подлинникне памалла. Енчен те çын документсен копине илсе пырать пулсан, ăна малтан нотариус патĕнче çирĕплетмелле.

Çапла вара документсене Пенси фончĕн уйрăмĕнче пăхса тухаççĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн 5 кунран кая юлмасăр çыннăн сертификат пама ыйтса çырнă заявление тивĕçтернине е тивĕçтерменнине çырса яраççĕ.

– Çак саккун миçемĕш çулччен ĕçлет?

– Ача амăшĕн капиталĕн ирĕкне 2007 çулхи кăрлачăн 1 - 2016 çулхи раштавăн 31-мĕшĕччěнхи тапхăрта иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана çуратнă (усрава илнĕ) хыççăн параççĕ.

– Çак саккунăн тĕп тĕллевĕ?

– Асăннă саккунăн тĕллевĕ ачасене çемьере ӳстерекен йĕркеллĕ хĕрарăмсене пулăшасси пулса тăрать. Çак 250 пин тенкĕ укçана сывлăх сыхлавĕ, сиплев валли мар, çемьере воспитани пама, хваттер туянма, вĕрентме, пулас пенсие йĕркелеме параççĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
калаçнă.

Юбилей

Саламлатпăр

Турай ял тăрăхне кĕрекен Анаткас ялĕнче пурăнакан хаклă аттене – **Аверкий Викторович ВИКТОРОВА** 75 çул тултарнă ятпа тата юратнă аннене **Вера Мефодьевна ВИКТОРОВАНА** 72 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. 47 çул пĕр-пĕрне килĕштерсе пурăнса пире вĕрентсе, ăс-тăн парса пынăшăн, тĕрĕс çул çине тăратнăшăн тав тăватпăр. Сывлăхăрсем çирĕп пулччăр, кĕреке тулли пултăр, кил ăшши пире яланах ăшăтса тăтăр.

Сире саламласа 2 ывăлĕпе кинĕсем, 3 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 11 мăнукĕ, тăванĕсемпе кӳршисем.

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăрăма, юратнă аннене – Анатри Панкли ялĕнче пурăнакан **Маргарита Якимовна НИКОЛАЕВАНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Мăшăрăм, аннеçĕм, эсĕ пирĕншĕн çĕр çинчи чи çывăх çын. Эс пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхӳпе, тирпейлĕхӳпе палăрса тăратăн. Çуралнă кун ячĕпе саламласа сана эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Тӳпере саншăн яланах ăшă хĕвелпе телей çăлтăрĕсем кăна çуталса тăччăр, хуйхи-суйхи пăрăнса ирттĕр. Çĕр çинчи мĕн пур ырлăха сана сунатпăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсем, ывăлĕсем, çывăх тăванĕсем.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхне кĕрекен Кĕçĕн Тутаркас ялĕнче пурăнакан **Раиса Владимировнапа Петр Степанович ПУШКИНСЕМ** çак кунсенче сумлă юбилей – хăйсем пĕрлешсе пĕр çемье çавăрнăранпа, пурнăçăн анлă çулĕпе алла-аллăн тытăнса утма тытăннăранпа 50 çул çитнине паллă тăваççĕ. Çав ятпа эпир вĕсене чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, чĕре ăшши, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, тату пурнăç сунатпăр, малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе татах нумай-нумай çул пурăнмалла пултăр.

Çулсем иртни сире ан кӳтĕр тунсăх,
Вăй-халусем çеç пулччăр иксĕлми.
Ылтăн туйпа сунатпăр ырлăх-сывлăх
Тата çап-çут телей нихçан сӳнми.

Саламлаканĕсем: Голишниковсен, Петровсен, Колесниковсен çемйисем.